Александр ЛУКАШИН сăвви
Иван АРШИНОВ кĕвви

Шупашкар тинĕсĕ

Ташлаççĕ янкăс кĕвĕллĕн
Măн Атăл хумĕсем,
Çиçеççĕ ылтăн-кĕмĕллĕн
Хĕвеллĕ карапсем.

Хушса юрламалли:

Çĕн тинĕспе ишсе пырсан
Чуна епле аван:
Тухать (тухать) Шупашкартан.
Тем тĕрлĕ пăрахут паян.

2 хут

Мускавалла каятăп-и,
Анатăп-и туран, —
Хуласене калатăп эп
Салам Шупашкартан.

Хушса юрламалли.

Ăçта кăна пулмарăмăр,
Ăçта кăна çитмен,
Сана асран ямарăмăр,
Юратнă Чăвашъен.

Хушса юрламалли.